**Путене юрри**

Пĕррехинче эпир, асаттепе иксĕмĕр, вăрмана пĕрлĕхен пуçтарма кайрăмăр. Ансăр сукмакпа, сарă тулă пуссипе пыраттăмăр. Кĕтмен çĕртен: «Пĕтпĕлтĕк! Пĕтпĕлтĕк! Путĕр-путĕр-путĕр!» – илтĕнчĕ тырă хушшинчен.

– Асатте, мĕн сасси ку? – ыйтрăм эпĕ.

– Путене çапла юрлать, – пулчĕ хурав.

– Путене?.. Мĕн каласа юрлать-ши пĕчĕк кайăк?

– Путĕр-путĕр путене сарă тулла юратать, тырă ăнса пулнăран кăçал вăрăм авăтать, – хăй пĕлнĕ пек ăнлантарчĕ ватă.

Сукмакпа малалла утрăмăр. Тырă хушшинчен каллех кайăк сасси илтĕнчĕ. Çине-çинех авăтрĕ канăçсăрскер.

– Асатте, çăра тырă хушшинче путене хăйĕн йăвине тупайман-ши? – сисчĕвлентĕм эпĕ. – Чĕпписене йыхăрать пулинех.

– Ху ыйтса пĕл, – те шӳтлет, те чăннине калать асатте.

Мĕн пулать-килет. Путене кĕввине пăсмасăр çăвар туллин кăшкăртăм:

– Путĕр-путĕр путене, санăн йăву хăш енче!?

Лешĕ кĕттермерĕ, хурав пачĕ:

– Пĕтпĕлтĕк! Пĕтпĕлтĕк! Выр-выр-выр!

Кайăк мĕн каланине ăнланаймарăм. Вăрттăн чĕлхене асатте чухлать иккен, самантрах куçарса пачĕ:

– «Пĕр пĕрчĕрен пин пултăр, выр-выр-выр!» – çапла ыră сунать путене тырă-пулă ăстине.

– Мĕншĕн? – тĕпчерĕм эпĕ.

– Уй-хире сухаласа тырă акакнишĕн... Кулачă çитĕнтернишĕн...

– Эпир санпа иксĕмĕр кулачă çитĕнтерместпĕр-иç.

– Пирĕн ялта комбайнер Мишша пур, – ăнлантарчĕ асатте.

Хă, тинех ăнкартăм: путене тырă вырма вăхăт çитнине юрла-юрла систерет иккен. Паянах, пĕрлĕхен татса таврăнсанах, кайса чĕнетĕп Мишша пиччене!

Кĕçех асаттепе иксĕмĕр вăрмана çитрĕмĕр. Пĕрлĕхен ай нумай кунта! Хĕрлĕ çырла çупкăмĕсене пĕрер пурак тултартăмăр. Килелле таврăннă чух пăхатпăр – сарă тулă пуссинче комбайн çӳрет. Хумлăн-хумлăн вылянакан пучахсене çунаттисемпе авăсса мăнаçлăн ишет хир карапĕ. Ай маттур та иккен Мишша пичче! Мĕн тумаллине хăех аван пĕлет. Тăп чарăнсах сăнатăп комбайн ĕçленине.

Çĕççисем кăчăртаттарса вылянаççĕ, кустăрмисем кăлтăртаттарса кусаççĕ, çуначĕсем пăлтăртаттарса çаврăнаççĕ... Вăт епле нумай ĕç тăвать комбайн. Çав вăхăтрах вăл тырă пĕрчине сиктĕрмере сиктерме те, пысăк бункера тултарма та ĕлкĕрет. Тырри нумай пухăнсан машинăна пушатать, Çăкăр заводне кулачă пĕçерме ăсатать.

Сасартăк чуна сӳ килчĕ. Комбайн хирте çаврăнать, путене кайăк мĕн курать?

– Путĕр-путĕр путене, санăн йăву хăш енче! – кăшкăртăм пур вăйран.

– Авă куратăн-и? – пуç сĕлтрĕ асатте.

Хă, путене чĕпписем вĕçме пуçланă иккен. Вырнă ана анлăшĕнче тĕмпĕл-тĕмпĕл чăпар кайăксем хĕвĕшеççĕ кăна. Çепĕç чĕлхеллĕсерсем выр-выр-выр тесе чĕвĕлтетеççĕ. Ак япала! Вĕсем комбайна юрла-юрла ĕçлеттереççĕ-иç. «Чыс-мухтав ĕççыннине, техĕмлĕ кулачă ăстине», – хамах ăнкарса илтĕм кайăк юррине. Самантрах çутă ĕмĕт çуралчĕ: ӳссен Мишша пичче пек тырă-пулă акса çитĕнтерес тетĕп. Пархатарлă ĕçчене сума сăвать путене.

*Ишентей, Н. Путене юрри : [калав] / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 413-414.*